Технологисемпе техника çĕнĕлĕхĕсем

# Çăкăр сĕтел çине хăй тĕллĕн килмест

*Ыран районта пурăнакансем çу каçа пурнăçланă ĕçĕсемпе хăпартланса, савăк кăмăлпа та мал ĕмĕтпе Муркашра Тыр-пул уявне пухăнаççĕ. Хресченшĕн Ака туйипа пĕр шайри ĕç уявĕсенчен пĕри вăл. Пурте кĕтнĕ çак кун çывхарнă май эпĕ Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп агрономĕпе Федор Аверкиевич ЕГОРОВПА тĕл пултăм. Кăçалхи ĕç кăтартăвĕсемпе интересленнĕ май агроном паянхи çĕр ĕçĕ çине епле пăхни те калаçу шăнăрĕнче пулчĕ.*

**– Федор Аверкиевич, юлашки çулсенче «çĕр-шыв пирĕн ял хуçалăхĕ çине пăхмасть» текенсем сахалланчĕç, чылайăшĕ «АПКна аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕпе ĕçлесе паянхи йывăрлăхсенчен хăватлă ĕçпе кăна аталану çулĕ çине тухма май пуррине ăнланса илчĕç. Вĕсен ĕçĕ малалла кайни те куç умĕнчех. Çапла мар-и?**

– Хресченĕн пĕтĕм йывăр ĕçĕ хамăн алă витĕр тата куç умĕпе иртет пулсан та, эсир калашле, юлашки çулсенче малтуртăмлă ĕçлекенсене аталанма çулсем чылай уçăлчĕç. Анчах çулсем уçăлчĕç тени алă усса ларнипех сĕтел çине çăкăр пырса выртать тенине пĕлтермест. Кунта тĕреклĕ экономика çулĕпе утас тесен çичĕ хут мар, çитмĕл çичĕ хут тар юхтарма тивет. Çавăн чухне кăна аякри тĕллевсем ума тăраяççĕ. Шăпах ĕçлекенсене хавхалантарма пăхнă та, ман шутпа, «АПКна аталантарасси» приоритетлă наци проектне çул паракансем. Тавах вĕсене уншăн.

**– Эсир хăвăр хуçалăхра çак наци проекчĕпе ĕçлессине мĕнле туса пыратăр?**

– Паян тĕрлĕрен çĕнĕ технологисем çуралса пурнăçа кĕрсе пыраççĕ, хăватлăрах техника ял хуçалăхне килет. Наци проекчĕ те вĕсемпе тан çĕнĕлĕхех. Анчах унăн пĕлтерĕшĕ нумай çул малалла. Эпир çавнашкал малашлăхлă ырă ăнтăлу çине алă сулаймастпăрах. Акă наци проекчĕ пулăшнипе çĕнĕ технологипе ĕçлекен сысна сарайĕ хута кайрĕ, çак çулпа кайсах энерги перекетлекен çĕнĕ техника туянса ĕçлеме пуçларăмăр, перспективлă вăрлăхсем акса тырă-пулă тухăçне ӳстертĕмĕр, хамăр ума çĕнĕ тĕллевсем лартрăмăр. Хуçалăх ĕçченĕсем вĕсене пурнăçлассишĕн пурте пĕрле кар тăрсан, палăртнă тĕллевсем пурнăçланмалла марри нимĕн те çук. Вĕсем пурнăçлансан ĕçлекенсен ĕç укçи ӳсĕ, ялти пурнăç çĕнĕ шая çĕкленĕ. Кашниншĕнех лайăх пулмалла. Çапла мар-и?

**– Хирĕçлеймастĕп. Анчах пĕлес килет, палăртнă тĕллевсем паян çуралнăскерсем марах-тăр. Вĕсен пуçламăш утăмĕсем хăвăр суйласа илнĕ çул тĕрĕс пулнине çирĕплетмеççĕ-и?**

– Ĕçре пĕрремĕш ăнăçусем пуртанах ĕнтĕ пĕрре суйласа илнĕ çултан пăрăнма кăмăл çук. Ăнланатăп, пĕчĕк тухăçлă хуçалăхсен малашлăхĕ çук. Вĕсем вырăнне агрохолдингсемпе акционерлă обществăсем йышăнĕç т. ыт. те. Пĕтес çулпа каяс мар тесен, çĕр ĕçĕнче кашни ĕçе вăхăтра пурнăçласси тĕп вырăнта пулмалла. Çакнашкал тĕллевпе кӳлĕнтĕмĕр те эпир кăçал çурхи уй-хир ĕçĕсене. Чĕпсене кĕркунне шутлама хушнăран пирĕн паян çак ĕçе тулли кăмăлпа пурнăçлама майĕ пур. Тĕшĕллĕ тырăсене пирĕн кăçал 665 гектар çинче пуçтарса кĕртмелле пулчĕ. Пит хĕретмерĕмĕр эпир çакăнта. Технологие пăхăнса ĕçлесе кĕр кунĕсенче хиртен 2033 тонна тырă пуçтарса кĕртсе кĕлете хутăмăр. Ку вăл иртнĕ çулхи кăтартуран (1232 тонна) 64 процент ытларах. Кунпа пĕрлех вăл кăтарту кăçал профинпланпа пăхса хăварнă виçерен те 600 тонна нумайрах. Кăçал кĕрхи тулăпа урпа тата сĕлĕ çулĕ пулчĕ тесе калас килет, мĕншĕн тесен шăпах çак культурăсем пысăк тухăçпа савăнтарчĕç пире. Тĕслĕхрен, кĕрхи тулăн 300 гектар çинчи «московская-39» сорчĕ гектар пуçне 35 центнер тухăç пачĕ. 85 гектар çинчи урпа тухăçĕ вара пирĕн çĕрсем çинче татах пысăкрах тухăç илме май пуррине çирĕплетрĕ: вăтам тухăç 45,6 центнерпа танлашрĕ. Кунта наукăпа тĕпчев институтĕнчен пĕрремĕш çул акса аталантармалли мелпе пĕр тонна илсе килнĕ урпан «Владимир» сорчĕ тĕлĕнтерчĕ. Унăн вăтам тухăçĕ гектар пуçне 73 центнерпа танлашрĕ. Çак институтпах çитес çул хупăсăр урпа сортне илсе килсе акма килĕшӳ турăмăр. Çакнашкал кăтартусене курса манăн хамăр хуçалăх çĕрĕсем çинчех гектартан 100 центнер тухăç илсе курас шухăш тĕвĕленчĕ. Çĕр ĕçĕнче кашни мероприятие технологие пăхăнса пурнăçласан эпир çак тĕллеве çĕнме пултарасси паян мана иккĕлентермест те. Анчах çакна валли хуçалăхри кашни ĕçченĕн пĕр тĕллевлĕ пулса, хушнă ĕçре «ку манăн мар, колхозăн» тесе алă сулмасăр ĕçлемелле, ĕçсене вăхăтра пурнăçлассине малти вырăна кăлармалла. Васкасси тăрăхĕ çапла ĕçлессе шанатăп та, ĕненетĕп те.

**– Ку вăл тыр-пул туса илессипе кăна ĕçлесен пурнăça кĕрĕ ĕнтĕ, анчах пирĕн хуçалăхсен кунсăр пуçне тĕрлĕ тĕслĕ выльăхĕ те, ытти ял хуçалăх культурисем те пур. Вĕсемпе мĕнле пулмалла? Тĕслĕхрен, çĕр улмипе? Юлашки çулсенче унăн лаптăкĕ калама çук чакса кайрĕ.**

– Çĕр çĕре пайланса ĕçлекен çыннăн нимĕн те пулмасть. Пĕрре персе кам икĕ мулкача тытайĕ-ха? Иккĕленмелле. Çапла ял хуçалăхĕнче те. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен хăйсен аталанăвĕн тĕп çулне палăртмалла та çав ене аталантарма çĕнĕ технологисене пурнăça кĕртмелле. Эпир те унччченхи çулсенче туса илнĕ хăш-пĕр культурăсенчен уйрăлтăмăр. Паян пире хумхантараканнисем ӳсен-тăран отраслĕнче: тырă-пулă тата çĕр улми. Çак çулпа кайса «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкне кăçал пĕлтĕрхинчен пысăклатрăмăр. Хамăр тĕрĕс тунине ĕçпе çирĕплетрĕмĕр – 85 гектар çинчи çĕр улмирен вăтамран гектар пуçне 230 центнера яхăн тухăç илтĕмĕр. Пурĕ 1960 тонна. Ыттисем епле ĕçленине пĕлместпĕр, анчах «иккĕмĕш çăкăр» тухăçлă культура пулнине шута илсе (кăçал пĕлтĕрхинчен 65 процент ытларах тухăç илтĕмĕр) унăн лаптăкĕсене çитес çул татах ӳстерме тĕллев пур.

**– Мĕнле сортсемпе ĕçлерĕр-ха? Кунта та çĕннисене çул патăр-и? Технологие пăхăннин витĕмĕ çĕр улми пуссисенче еплерех?**

– Сирĕн ыйту вырăнлă. Технологие пăхăнни ӳсĕм çулне уçни пирки каласшăнччĕ кăна. Виççĕмĕш уйхир бригадинче 18 гектар çине лартнă «удача» сорт çу каçипех технологие пăхăннăран кĕр çитсен гектар пуçне вăтамран 350 центнер тухăç парса савăнтарчĕ, аталану çулне кăтартрĕ. Çĕнĕ сортсем тенĕрен, кăçал пуçласа вăрлăхлăх лартнă «рокко» тата «Рет Скарлет» тухăççемпе савăнтарчĕç.

Кунта çакăн пек те каласа хăварас килет. Çĕр улмипе ĕçлес тесен ку ĕçе комплекслă пурнăçласа пымалла. Лартнă çĕр улмине тухăçлă туса илнипе пĕрлех ăна упрасси те малти вырăна тухать. Çакна шута хурса çитес çул 800 тоннăлăх çĕр улми хранилищине юсаса хута яма пăхатпăр. Пĕлтĕр çĕр улмирен 3,5 миллион тенкĕ тупăш илнĕччĕ пулсан, кăçал технологие пăхăнса ĕçленипех тупăш 8 миллион тенкĕрен иртмелле тесе шутлатăп.

**– Сирĕнпе час-часах калаçнă тăрăх эсир ял хуçалăхĕнче алă ĕçĕпе ĕçлессине чакарас çул çинче тăни курăнать. Çак енĕпе хăвăр хуçалăхра мĕн çĕннине пурнăça кĕртрĕр е планлатăр?**

– Сирĕн ыйтупа пĕтĕмпех килĕшетĕп. Пирĕн паян продукци хăй хаклăхне чакарассине мала кăлармалла. Ахальлĕн эпир рынок хутшăнăвĕсенче ыранхи кунпа пурăнаймăпăр. Çĕнĕ технологи çĕнĕ техника ыйтать. Пирĕн паян вăл е ку ĕçе вуншар çынна явăçтарассинчен пăрăнма çав çĕнĕ техникăна алла илмелле те. Ун чухне ĕç вăйĕн конкуренцийĕ пулать, ĕç укçин виçи ӳсет, пахалăх малалла каять. Пĕтĕмлетӳ: экономика çĕнĕ аталанăва çĕкленет. Çак çулпа кайса эпир йĕтем çинче хиртен килнĕ тырра техника пулăшнипе пĕр сăтăркăра аласа, типĕтсе, машина çине тиесе кĕлете ăсатассине пурнăça кĕртме пăхатпăр. Çĕр улми кăлармa комбайнсене явăçтарни тата ăна суйлама Германире кăларнă «Гримме» агрегат туянни алă вăйне самай сахаллатмалла. Çаксем вĕсем пурнăçлама йышăннă ыранхи ĕçсем. Паян вара манăн хамăра кăçалхи уй-хир ĕçĕсенче пулăшнă ĕçченсене ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсемпе продукци тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен анчахрах иртсе кайнă профессиллĕ уявĕпе тата ыран районта паллă тăвакан Тыр-пул кунĕпе саламласа ырлăх, сывлăх, телей, ăнăçу сунас килет. Çак сăмахсем хамăр хуçалăхри специалистсемпе тата ĕçлекенсемпе пĕрлех пире çĕр улми кăларма пулăшнă 6 шкул, Шупашкарти педколледж, районти тĕп больница, райадминистраци коллективĕсем тĕлĕшпе те. Вĕсем кирлĕ вăхăтра ытти çул та пире пулăшасран пăрăнмасса шанса тăратăп. Пĕрле пулсан тата пур майсемпе те вăхăтра усă курсан пирĕн пĕр гектар пуçне 400 центнер çĕр улми илме условисем çитеççĕ. Çапла пултăрччĕ те.

**Анатолий БЕЛОВ**
**калаçнă.**

Ял хуçалăх ыйтăвĕ кашни утăмрах

# «Малашлăха çĕнĕлĕхсемпе, çамрăксемпе çыхăнтаратпăр»

*Кунсем иртнĕ май черетлĕ ял хуçалăх çулĕ каярах та каярах юлса пырать. Унăн ӳсĕмĕсене тишкерни, пурнăçланă ĕçсене пĕтĕмлетни ыранхи кун аталанăвĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çапла шутлать те хăй вăхăтĕнче çĕр-шыв умĕнчи çар тивĕçне инçетри Афганистанра пурнăçланă воин-интернационалист, çартан таврăнсан тĕрлĕ ответлă ĕçсенче вăй хунă специалист, халĕ ăратлă выльăх ĕрчетекен Е. Андреев ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕ-завода ертсе пыракан Виталий СЕМЕНОВ.*

**– Виталий Иосифович, кĕр мăнтăрне пăхса хуçалăх аталанăвĕ пирки мĕнле шухăшсем пуçа килеççĕ?**

– Мĕн тунă – вăл кĕлетре. Урăх савăнмалли-мухтанмалли нимех те çук. Анчах вырма иртнипе ял хуçалăх çулне, тĕпрен илсен, пĕтĕмлетсе калама та пулать пулсан, чăн малтанах хуçалăх ĕçченĕсене пурнăçланă ĕçшĕн тав тата çывхаракан уяв ячĕпе саламлас килет. Вĕсем çакна тивĕç. Акă иртнĕ вырмара пĕрлехи тăрăшулăхпа эпир пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах тырă-пулă туса илме мехел çитертĕмĕр: унччченхиллех 800 гектар ытла лаптăк çинчен 1600 тонна ытла тырă кĕлете кĕртрĕмĕр. Вырмара ытларах çамрăксем ĕçлени ӳсекен ăру та ял хуçалăхĕ çине çаврăнса пăхма пуçлани пирки калать. Ку вара савăнтарать, çĕнĕ тĕллевсем çуратать.




**Хуçалăх ĕçĕсенче палăрнă çамрăк механизаторсем (сулахайран сылтăмалла): выльăх апачĕ янтăлас ĕçре активлăх кăтартнă, çĕр улми кăларас çĕрте малти ретре пулнă, кĕр аки валли çĕр хатĕрленĕ Алексей Ивановпа хуçалăх ĕçĕсенчен çур акирен пуçласах пăрăнман Андрей Иванов. 18 çулхи яшсем хуçалăх аталанăвне çĕнĕ шайра кураççĕ.**

**– Тĕллевĕсем пысăк-и тата?**

– Пысăк-и, пĕчĕк-и, анчах вĕсем пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ. Чăн малтанах – ĕç укçи. Кăçал кăна эпир ăна вăтамран 40 процент ӳстертĕмĕр. Ума лартнă тĕллевсене пурнăçлама иртнĕ çу кунĕсенче выльăх апатне те иртнĕ çулхинчен ытларах хатĕрлесе хăвартăмăр, мĕншĕн тесен çакă вăл выльăх кĕтĕвне тивĕçлĕ шайра тытма пулăшмалла. Выльăх пулсан производство пулать. Çакна хуçалăхри кашни ĕçчен ăнланать. Тĕп тĕллев вара производствăна çĕнĕ технологисем кĕртсе ĕçсене ытларах механизацилесси. Çак ĕмĕтсемпех çитес çур аки валли паянах 30 тонна ытла сĕрмелли-çунтармалли материалсем, çителĕклĕ тенĕ пекех минераллă удобренисемпе тырă вăрлăхĕ хатĕрлесе хутăмăр.

**– Ыран – Тыр-пул уявĕ. Паян хăвăр хуçалăхри хăш ĕçченсене ырăпа палăртма пултаратăр? Ыттисемшĕн тĕслĕх пулакансем пур-и сирĕн коллективра?**

– Кунта хирĕçле хурав пулаймасть те. Кашнин ĕçнех тĕплĕ тишкеретпĕр, вĕсем малалла туртăнса, ыттисене хавхалантарса пурнăçланă ĕçсене шута хуратпăр, вĕсен хуçисене хавхалантаратпăр, тав тăватпăр. Иртнĕ вырмара Валерий Пугачев комбайнер «Енисей-1200» комбайнпа пысăк лаптăк çинчен тыр-пул пухса кĕртрĕ. Хиртен йĕтем çине тырă турттарнă çĕрте Виталий Романовпа Федор Спаскин, йĕтем çинчи ĕçсенче Юрий Михайлов водительсем тăрăшулăхпа палăрчĕç. Унччченрех выльăх апачĕ янтăлассипе Г. Леонтьев, Д. Порфирьев, В. Волков ĕçченсем тăрăшса вăй хучĕç. Уй-хир ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннине шута хурса паян фермăсенче ĕçлекенсене те манса хăварас килмест. Вĕсем: Л. Ушкова ĕне сăваканпа Н. Архангельский выльăх пăхакан, сысна ферминче ырми-канми вăй хуракан Е. Скворцова, Г. Неволина, Л. Мясникова, М. Михайлова тата В. Спаскинапа З. Онькова пăру пăхакансем. Уй-хир бригадисенче ĕçлекенсем те паян ырă ята тивĕç. Вĕсене пурне те Тыр-пул уявĕпе ăшшăн саламлатăп, çирĕп сывлăх тата тăнăç пурнăç сунатăп.

**Анатолий БЕЛОВ**
**калаçнă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Вырма-2008 пĕтĕмлетĕвĕсем

*Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăçалхи вырмара пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче мĕн чуль тырă, çĕр улми акса-лартса вĕсене мĕнле тухăçпа пуçтарса илнине кăтартни*

**Колонкăсенче: 1. Тĕш-тырă лаптăкĕ (га). 2. Тырă-пулă тухăçĕ (бункер виçипе – ц). 3. Çĕр улми лаптăкĕ (га). 4. Унăн тухăçĕ (ц).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 794 | 18,5 | 25 | 84,4 |
| «Волга» | 300 | 20,0 | – | – |
| «Восток» | 380 | 29,1 | 10 | 121,0 |
| «Герой» | 581 | 33,4 | 90 | 228,0 |
| К. Иванов яч. хис. | 160 | 12,2 | – | – |
| Ильич яч. хис. | 665 | 30,6 | 85 | 229,4 |
| ВТМ | 150 | 17,2 | – | – |
| Ленин яч. хис. | 175 | 20,1 | 9 | 93,3 |
| «Лидер» | 25 | 16,0 | 6 | 100,0 |
| «Моргаушская» | 76 | 23,0 | – | – |
| «Оринино» | 759 | 21,9 | 30 | 236,7 |
| «Передовик» | 514 | 11,0 | 4 | 107,5 |
| «Свобода» | 1213 | 25,8 | 180 | 166,8 |
| «Сеятель» | 391 | 16,8 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 1162 | 28,8 | – | – |
| «Рассвет» | 651 | 15,4 | – | – |
| «Ударник» | 1561 | 29,8 | 320 | 165,0 |
| Чапаев яч. хис. | 300 | 16,7 | 16 | 140,6 |
| «Чемеево» | 406 | 19,1 | 18 | 125,0 |
| Чкалов яч. хис. | 555 | 30,2 | – | – |
| «ДаАн» | – | – | 40 | 210,0 |
| Мичурин яч. хис. | 528 | 18,3 | – | – |
| «Хлебороб» | 96 | 12,0 | – | – |
| «Колос» | 120 | 16,0 | – | – |
| «Агросоюз «Картофель» | – | – | 13 | 180,0 |
| КФХ Сретинский | 135 | 20,0 | 15 | 100,0 |
| КФХ Бархаткин | 155 | 25,0 | 32 | 160,0 |
| КФХ Гаврилов | 170 | 20,0 | 35 | 150,0 |
| КФХ Толстов | 112 | 20,0 | 11 | 160,0 |
| КФХ Ямангеев | 42 | 20,0 | 2 | 100,0 |
| ИП Матвеев | 91 | 18,2 | – | – |
| ИП Горбунов В.В. | 100 | 18,0 | 10 | 100,0 |
| Ытти КФХсем | 829 | 18,6 | 112 | 120,0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **13196** | **23,1** | **1063** | **168,1** |

## Çĕртме сухи вăй илет

Вырмапа кĕр аки вĕçленĕ май çĕр ĕçченĕ çитес çулхи ĕмĕтпе пурăнмаĕçлеме пуçлать. Çак тĕллевре çĕртме сухи тăвасси кайри ретре мар. Ăна ăнланса паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче çĕртме сухи тăвасси çине ытларах тимлĕх уйăраççĕ. Тырă-пулăран, çĕр улмирен, тымар çимĕçрен пушаннă хирсенче паян яра кунах суха агрегачĕсем вăй хураççĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун тĕлне хуçалăхсем 4345 гектар çинче çĕртме сухи тунă та. Ку ĕç уйрăмах «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», «Передовик», «Свобода», «Ударник», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче ăнăçлă пырать. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен илсен, Матвеев ИП тракторисчĕсем ăнăçуллăрах: 132 гектар.

**А. ПЕТРОВ.**